28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 17 ШАМАТКУН 223 (6974) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татар

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене тата СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕсене ноябрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашни колхоз, совхоз, подсобнăй хуçалăх тата уйрăм хресчен хуçалăхĕсем тăрăх государствăна тырă парса татмалла тăвас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушса хăварчĕ. Республикăри районсем умне пленум çакăн пек боевой задача кăларса тăратрĕ: **Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту вăхăтĕнче туса çитерейĕмен ĕçсене 20 кун хушшинче туса пĕтермелле,** ноябрĕн 5-мĕшĕпе 25-мĕше хушшинче государствăна план тăрăх парса татмалăх авăн çапса тырă хатĕрлемелле.

Ун хыççăн ĕнтĕ 10 кун иртрĕ, анчах та чылай районсенчи партипе совет органĕсен руководителĕсем пленум решенийĕсенчен тивĕçлĕ выводсем туман. Çăмахран, Вăрмар районĕ ноябрĕн 10-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче хатĕрлев пунктне пĕтĕмпе те 68 тонна çеç тырă леçсе панине мĕнпе ăнлантарса памалла-ха? Кунта, паллах, партин Вăрмар райкомĕн секретарĕ Смирнов юлташ тата райсовет исполкомĕн председателĕ Биктемиров юлташ ВКП(б) Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртме васкамаççĕ. Пленум Смирнов юлташăн докладне итлесе Вăрмар районĕнче государствăна тырă парас ĕç чăтма çук япах пынине уйрăмах паларттрĕ. Кунта райком, райисполком тата Наркомзаган районри уполномоченнăйĕ уйрăм колхоз руководителĕсем государствăна тырă парас ĕçе чăрмантарса пынипе килĕшсе лараççĕ. государствăна тырă парас ĕçре тĕл пулакан сиенлĕ практикăна тата саботажа вăхăтра пĕтерсе пымаççĕ.

Çавăн пекех пленум Улатăр районĕн руководителĕсене (парти райкомĕн секретарьне Горбунов юлташа, райисполком председательне Поверенов юлташа, райполнаркомзага Депутатов юлташа, хытă асăрхаттарса хăварчĕ. Анчах кунта та XXIV-мĕш пленумăн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе большевикла ĕçе тытăнман-ха. Район руководителĕсем государствăна тырă парас ĕçри çитменлĕхсем çине пăхса лараççĕ, çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйне хурса кĕрешмеççĕ. Ноябрĕн 10-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче Улатăр районĕ государствăна пĕтĕмпе те 19 тонна çеç тырă панă. Кунта государствăна тырă памалли плана тултарас тесе хăçан большевикла пăшăрханма тытăнаççĕ-ши? Тивĕçлипе çакăн пек ыйту туха тăрать: Улатăр районĕн руководителĕсем XXIV-мĕш пленум решенийĕсенчен хăйсем валли кирлĕ вывод тума пултараççĕ-и, çук-и? Тырă хатĕрлес тĕлĕшпе районра ĕçе тӳрлетсе яма пултараççĕ-и, çук-и?

Калинино районĕ çитес кунсенчех тырă парса татма пултарать. Анчах та район руководителĕсем XXIV-мĕш пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, районра государствăна тырă парас ĕç питĕ майĕпен пырать.

Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăхасан, Ишлей, Муркаш, Куславкка, Октябрьски, Елчĕк районĕсенче те государствăна тырă парса татас тĕлĕшпе мĕнпур майсемпе усă курмаççĕ. Районри хăшпĕр работниксен пуçне çакăн пек йăнăш та сиенлĕ шухăш кĕрсе ларнă: „Государствăна тырă парас тĕлĕшпе районра ĕçсем япăхах пымаççĕ-ха", тесе шухăшлаççĕ вĕсем. Çавăн пек шухăш-кăмăлсем ĕнтĕ ĕç хăй тĕллĕн пуласса шанакан тăваççĕ, государствăна тырă вăхăтра парса татас ĕçе кансĕрлеççĕ. Çав районсен руководителĕсем тырă памалли плана тултарассишĕн государство умĕнче ответлă пулнине ăнланмаççĕ. „Пирĕн район лайăх вырăнта тăрать-ха", тесе йăнăш шухăшлани çав руководительсене сиенлĕн лăплантарать, парти хытă асăрхаттарнине халхана чикми те туса хурать. Районсен руководителĕсене çавăн пек тума намăс!

Республикăра халĕ государствăна тырă парас ĕç питех те çителĕксĕр пулса пырать. Ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татас тесен, вуншар хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татас тесен, мĕн тумалла-ха? Чи малтанах ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пымалла.

Авăн çапас ĕçе хăвăртлатмалла, МТС комбайнĕсемпе молотилкисене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле, авăна çĕрле те, кантăрла та çапмалла, авăн çапнă çĕрте колхозăн машинисемпе туллии усă курмалла, тăпачăпа çапассине организацилемелле. Авăн çапас ĕçĕн пахалăхне ӳстермелле, тырра арпаулăм çине пĕр пĕрчĕ те ямалла мар; тырра тасатса типĕтес ĕçе организацилемелле.

Унтан государствăна ку таранччен те тырă парса татман колхозсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе пымалла, вĕсене татаклă пулăшу памалла, вĕсене государство умĕнчи пур обязательствăсене те пĕр çăмахсăрах тултармалла тăвас пулать. Çавăн пекех тата совхозсен, подсобнăй хуçалăхсен ĕçне тĕрĕслесе пымалла. Государствăна ку таранччен те тырă парса татман уйрăм хресчен хуçалăхĕсене хăйсен обязательствисене тултармалла тăвас пулать.

Юлашкинчен, Вăрнар районĕнчи колхозсенчен пример илсе, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парас ĕçе анлăн сарса ямалла. Пирĕн государствăна тырă парса татма, унтан вăрлăх фондне тата ытти фондсене хывса хăварма пур условисем те пур. Кунта тăрăшса ĕçлени, хăмăран Тăван çĕршывăн кунçулĕшĕн тăрăшни çеç кирлĕ.

Молотов юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен тунă докладра хамăрăн Тăван çĕршывăн çарпа экономикăри вăй-хăватне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе совет халăхĕ умĕнче тăракан задачăсене тĕплĕн каласа панă. Большевиксен партийĕ ячĕпе, Совет правительстви ячĕпе Молотов юлташ пирĕн халăха ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнсе каларĕ:

„Çак задачăсене пурнăçа кĕртес тесе, хамăрăн ĕмĕр иксĕлми большевикла вăй-хăватпа, совет çыннисен мĕнпур хăватлă вăйĕпе тытăнар. Пире Сталин юлташ вĕрентнĕ пек ĕçлесе пырар!"

Çакăн пек чĕнсе каланине ответлесе пирĕн чи малтанах ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татмалли плана тултармалла. Çакă ĕнтĕ пирĕн паян тумалли патриотла тивĕç пулса тăрать.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА НОЯБРЕН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	плана тултарнă	Районсем	плана тултарнă
1. Вăрнар	109,4	16 Октябрьски	84.9
2. Етĕрне	101,0	17. Ишлей	82.7
3. Красноармейски	9 ,8	18. Вăрмар	82,1
4. Сĕнтĕр	97,7	19. Канаш	81.7
5. Çурачăк	97,6	20. Йĕпреç	80,2
6 Советски	95.8	21. Куславкка	79,8
7. Элĕк	95,6	22. Комсомольски	79,6
8. Муркаш	95,5	23. Чкаловски	74,5
9. Çĕрпӳ	94,7	24. Улатăр	74,2
10. Шăхасан	94,4	25 Первомайски	74,0
11. Калинино	9[illegible].7	26. Хĕрлĕ Чутай	73,0
12. Сĕнтĕрвăрри	92,5	27. Тăвай	67.6
13. Шупашкар	92,3	28. Çĕмĕрле	66,2
14. Елчĕк	88,5	29. Шăмăршă	59,9
15. Пăрачкав	86,4	30. Кувакино	47,1

Çулпуç вĕрентнĕ пек ĕçлеме пулаççĕ

ЕЛЧĔК. (Хамăр корр.). Аслă Шăхальти „Ново Чурино" колхоз членĕсем хăйсен пухăвĕнче кăçалхи ялхуçалăх çулĕн итогĕсене пăхса тухрĕç. Колхоз председателĕн заместителĕ А. Коренков юлташ колхоз кăçал мĕнле ĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕ.

Колхозниксем çĕнтерӳ çулĕнчи тырпула уй-хиртен вăхăтра та тирпейлĕ пухса кĕртнĕ, авăн çапса пĕтернĕ, государствăна тырă парса татнă. Колхоз халĕ тырпула ĕçкунĕсем тăрăх валеçме хатĕрленет.

Çак пухура колхозниксене В. М. Молотов юлташ 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладпа паллаштарчĕç. Агитатор докладăн кашни пайне йĕркеллĕ каласа пачĕ хăшпĕр вырăнсене вуласа парса ăнлантарчĕ. Колхозниксем Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерӳвĕсемпе Совет халăхĕн хастар ĕçĕсем çинчен каланине савăнса итлерĕç.

Юлашкинчен агитатор В. М. Молотов Совет халăхĕ умне лартнă задачăсем çинчен каласа пачĕ. Çав пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçлас, Тăван çĕршывăн вăй-хăватне татах та ӳстерес, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тесе, Сталин юлташ вĕрентнĕ пек ĕçлемелли çинчен каларĕ. Агитатор каласа пĕтернĕ хыççăн колхозниксем туха-туха каларĕç.

— Ку докладран нумай çĕнĕ япаласем çинчен пĕлтĕмĕр эпир. В. М. Молотов юлташ докладĕ пире тата лайăхрах ĕçлеме хаваслантарать,—терĕç колхозниксем.

Пухура пулнисем В. М. Молотов юлташ çулпуç вĕрентнĕ пек ĕçлеме ченнине ответлесе тата лайăхрах ĕçлеме, государство умĕнчи парăмсене çитес кунсенчех татма, СССР Верховный Совет суйлавне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме пулчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Парăмсене вăхăтра татаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Лешкас-Асламасри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государствăна аш-какай, çăм, çăмарта пĕтĕмпех парса татрĕç. Çавăн пекех колхоз та аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта памалли обязательствăсене тултарчĕ. Аш-какая килес çулшăн та парса татнă.

(Хамăр корр.).

Выльăх-чĕрлĕх хĕл каçарма хатĕр мар

ЕТĔРНЕ. Выльăх-чĕрлĕхе ăшă витере тата лайăх пăхса хĕл каçарас тĕлĕшпе районри чылай колхозсем тăрăшса ĕçлерĕç. „Красный Октябрь" колхоз обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма пур енчĕн те хатĕрленсе çитнĕ.

Кунпа пĕрлех районра выльăх чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлекен колхозсем те пур. 2-мĕш Ирçе ял Советне кĕрекен колхозсенче пĕрринче те обществăлла выльăх-чĕрлĕхе валли çителĕклĕ таран апат хатĕрлесе хуман. Çак ĕç ял Совет исполкомĕн тата колхоз правленийĕн ларăвĕсенче каласнипех иртсе пырать. 1-мĕш Ирçери Суворов ячĕпе тăракан колхозра пăрусемпе путексем валли çуртсем пачах та çук. 2-мĕш Ирçери „Комбайн" колхозра сысна витисене юсама та тытăнман, ытти выльăх витисен шăтăк-çурăкĕсене питĕрмен, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе валли апат та уйăрса хуман. Çакăн пекех Полянкари Киров ячĕпе тăракан колхозра та 9 лаша витинчен 3-шĕ кăна лашасене усрама юрăхлă, сысна фермин çурчĕсене пăрусене хупмалли витене тĕпрен юсамалла. Калинин ячĕпе тăракан колхозра ĕнесене хупма витесем çитмеççĕ, туса пĕтермен ĕне фермин çурчĕ çумăр айĕнче çĕрсе ларать.

Колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăшă витере тата лайăх пăхса хĕл каçарас тĕлĕшпе кĕске вăхăтрах татаклă улшăнусем тумалла.

Г. ТАМИР.

Савăнăçлă уявларĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Дубровкăри „Красная звезда" колхоз кăçал та, ытти çулсенчи пекех, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕ. Государствăна срокчен тырă парса татрĕ. Октябрь уявне колхозниксем савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Праçник кун колхозниксен чаплă лару пулса иртрĕ. Çартан килнĕ воинсем П. Григорьев, Я. Никифоров, А. Сотников хăйсен фронтри ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Лару пĕтнĕ хыççăн ĕçкĕ-çикĕ пулчĕ.

М. ИВАНОВ.

Коммунистсем суйлава хатĕрленес ĕçре

ЭЛĔК. Вырăс Сурăмĕнчи партин пуçламĕш организацийĕнче 11 коммунист шутланать. Коммунистсем производствăра ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеççĕ. Партин пуçламĕш организацийĕн секретарĕ пулса ял Совет председателĕ Н. И. Бочков юлташ ĕçлет. Партин пуçламĕш организацийĕ „Красное Сормово" (председателĕ Никандров коммунист), „Первое мая" (председателĕ Гаврилов коммунист), „Доброволец"(председателĕ коммунист Бочков) колхозсене ертсе пырать. Асăннă колхозсем кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. государствăна срокчен тырă парса татрĕç. Коммунист П. И. Морозов юлташ „Доброволец" колхозăн ферма заведующийĕ, В. Соколов коммунист çав колхозра учетчик пулса ĕçлет.

Партин пуçламĕш организацийĕ коммунистсен ĕçне пĕрмаях контроллесе тăрать, артельсенче ĕçе организацилес, çирĕп дисциплина тăвас тĕлĕшпе пысăк пулăшу парса тăрать. Агитациллĕ-массăллă ĕçе организацилес тĕлĕшпе те парторганизаци тăрăшса ĕçлет. Парторганизаци çумĕнче 35 çынран агитколлектив организациленĕ. Агитколлективра коммунистсем, комсомолецсем тата учителсем ĕçлеççĕ. Вĕсем тăтăшах колхозниксене „СССР Верховный Советне суйламалли Положение" ăнлантарса параççĕ, хаçатсем вулаççĕ, калаçусем ирттереççĕ. Агитколлектив руководителĕ пулса кунта Отечественнăй вăрçă инваличĕ, парти членĕн кандидачĕ А. И. Крылов юлташ ĕçлет.

Суйлав положенине вĕренес тĕлĕшпе агитаторсемпе семинар ирттернĕ, агитаторсене уйрăм участоксем çумне çирĕплетнĕ. Шкулта аслă классенче вĕренекенсем валли суйлав Положенине вĕренме уйрăм кружок организациленĕ. Кружок руководителĕ пулса истори преподавателĕ Г. М. Казаков юлташ ĕçлет. Вулав çурчĕн заведующийне А. Молякова юлташа „Доброволец" колхозăн иккĕмĕш бригади çумне çирĕплетнĕ. Кунта вăл икĕ занятин ирттернĕ. Колхоз счетовочĕ Н. Т. Морозов юлташ 4-мĕш бригадăра, коммунист П. Н. Морозов юлташ фермăра ĕçлекенсем хушшинче агитаци ĕçне туса пыраççĕ. Сатлайкина, Сорокина тата Гаврилова учительницăсем суйлав Положенине колхозниксем хушшинче килĕрен çӳресе ăнлантарса параççĕ.

Вулав çурчĕ çумĕнче драмкружок ĕçлет, ăна Молякова юлташ ертсе пырать. Çав кружокра мĕнпурĕ 15 çын тăрать. Пур колхозсенче те стена хаçачĕсем тата боевой листоксем кăлараççĕ. Кунсăр пуçне, ял Советĕнче „Тăван çĕршывшăн" ятлă илемлĕ стена хаçачĕ тухса тăрать.

Парти организацийĕ хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать, парти пухăвĕсем вăхăтра тата йĕркеллĕ пулса иртеççĕ. Пухусен кун йĕркине колхоз пурнăçĕ çинчен, шкул пурнăçĕ çинчен тата ытти тĕрлĕ ыйтусем лартса сӳтсе-яваççĕ. Кашни коммуниста парти порученийĕсем панă, çав поручениесене пурнăçласа пынине парти организацин секретарĕ яланах контроллесе тăрать. Кăçал парти ретне 2 член, пĕр кандидат илнĕ. Кандидата илнĕ Отечественнăй вăрçă инваличĕ, „Красное Сормово" колхозри чи лайăх конюх Федоров юлташ вăрçă пуçланиччен, 1937 çултанпах конюхра ĕçленĕ, халĕ старши конюх пулса ĕçлет. 8 кĕсререн вăл 7 тиха илсе çитĕнтернĕ. Лашасем унăн яланах лайăх тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçăран демобилизаци шучĕпе таврăннă инвалидсене ĕçе хутшăнтарас тĕлĕшпе те парторганизаци тăрăшать. Хĕрлĕ Çартан таврăннă икĕ юлташ—Сорокин юлташ „Доброволец" колхозра, Петров юлташ „Первое мая" колхозра—завхозсем пулса ĕçлеççĕ. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе „Доброволец" колхозра 30 сысна çури, 5 пăру уйăрса хунă. „Красное Сормово" колхозра фронтовиксен çемьисене кăмакасем юсаса панă, сысна çурисем тата ытти выльăх-чĕрлĕх парса пулăшнă.

Çапла вара Вырăс Сурăмĕнчи партин пуçламĕш организацийĕ СССР Верховный Советне хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Н. КОНДАКОВ.

ПУЛТАРУЛЛĂ МАСТЕР

Икĕ çул каярах Николай Камаев Совет çĕршывĕн ытти паттăр воинĕсем пекех Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ. 1943 çулта госпитальран тухнă хыççăн вăл Шупашкара таврăнать. Пĕтĕм Совет халăхĕ çĕнтерӳ вăхăтне хăвăртрах çывхартас тесе тырра кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçленĕ вăхăтра унăн килте ĕçсĕр пурăнас килмен. Вăл Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра пырса кĕрет. Малтанах вăл заводра каменщик пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕç нормине уйăхран уйăха ирттерсе тултарнă. Лайăх ĕçленине кура Камаев юлташа заводри строительство управленийĕ мастер пулса ĕçлеме лартнă. Кунта та вăл пысăк пултарулăхпа ĕçлет, заводра ĕçлеме кĕрекен çĕнĕ кадрсене тăтăшах вĕрентсе пырать. Унăн участокĕнчи Праздничный юлташ ертсе пыракан каменщиксен звени заводри ытти пур звеносенчен те малта пырать, хăйĕн ĕç нормине звено кулленех 248 процента çити тултарса пырать.

С. ВИКТОРИНОВ.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленеççĕ

Сĕнтĕр районĕнчи Шупуç ял Совечĕ çумĕнчи партин пуçламĕш организацийĕ суйлав законне ăнлантарас ĕçе лайăх туса пырать. Ял Советне кĕрекен „Коммунар", „Броневик", Красное знамя" колхозсенче агитаторсем ĕçлеççĕ. Агитколлектива Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕ орденоносец Любовь Ивановна Яшмолкина юлташ ертсе пырать. Вăл кашни эрнерех агитаторсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса парать.

Суйлав законне ăнлантарса панă чух яланах тĕнчери лару-тăру çинчен каласа парать.

Я. ЯКОВЛЕВ.

* * *

СОВЕТСКОЕ Кашни ял Советĕнчех суйлав законне вĕрентес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Мăн Чурашри агитколлектив (руководителĕ П. Сорокин коммунист) кашни 10 кил пуçне пĕр атитатор çирĕплетсе панă. Вĕсем кашни виçĕ кунта пĕрер канашлу туса ирттереççĕ. Суйлав Положенине тĕплĕн вĕрентнипе пĕрлех агитаторсем СССР Конституцийĕ çинчен ăнлантарса параççĕ. Çухрара суйлав законне ăнлантарас тĕлĕшпе 34 агитатор ĕçлет. Вĕсене агитколлектив руководителĕ П. Васильева ертсе пырать. Суйлав законĕпе СССР Конституцине халăха ăнлантарса пама тытăниччен агитаторсем кружокра вĕреннĕ. Çавăн пекех Турайра, Мăн Пакăшра суйлав законне тĕплĕн ăнлантарса параççĕ.

ВКП(б) райкомĕ агитколлектив руководителĕсемпе темиçе хутчен канашлу туса ирттерчĕ. Агитаторсем пулса чылай çĕрте Хĕрлĕ Çартан таврăннă юлташсем ĕçлеççĕ. Агитколлективсем агитаторсемпе тăтăшах канашлусем ирттереççĕ.

Я. СИГАЙ.

* * *

Шупашкарти Пединститутра суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе 31 агитатор ĕçлеççĕ. Нумай пулмасть агитаторсен семинарĕ пулса иртнĕ, семинарта суйлав Положенине епле ăнлантарса памалли çинчен каласа панă.

Халĕ Положение агитаторсем уйрăм группăсем тăрăх вуласа ăнлантараççĕ. Кашни группăрах икшер занятирен каймар пулса иртнĕ.

Институтăн вулав пӳлĕмĕнче СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленес тĕлĕшпе ятарласа литература пухса хатĕрленĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Шупашкарта Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланă çынсен пысăк ушкăнне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ учителĕн Хисеплĕ грамотине Çĕмĕрлера 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулти учитель Г. Г. Гаврилов, Çĕмĕрле районĕнчи Мыслецри 7 çул вĕренмелли шкулти учитель Н. Ф. Ермошин, Çĕрпӳри педагогика училищин преподавателĕ И. И. Иванов тата ыттисем те, пурĕ 11 çын илчĕç.

Унтан Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ врачĕн Хисеплĕ грамотине Çĕмĕрле районĕнчи больницăн главнăй враче М. Н. Ермишина, Чăваш АССР искусствин тава тивĕçлĕ деятелĕн Хисеплĕ грамотине пĕр заводри художествăллă пултарулăх коллективĕн руководителĕ О. П. Дальская, Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕн Хисеплĕ грамотине А. М. Мудров илчĕç.

Ун хыççăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине ВКП(б) Чăваш Обкомĕн оргинструкторски отделăн инструкторĕ Е. В. Белоусова, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ П. П. Кулагин, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ В. Д. Спичков, Хузангайпа Шавлы поэтсем тата ыттисем те, пурĕ 35 çын илчĕç.

Награда илнисем хăйсен ĕçĕсене пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна, Сталин юлташа, çавăн пекех Чăваш АССР правительствине тав турĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ награда илнисене саламласа, вĕсене малашне те тухăçлă ĕçлеме сывлăх сунчĕ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

ХАЛĂХ ВАЛЛИ АТĂ-ПУШМАК

СССР Çăмăл промышленность Халăх Комиссариачĕн коллегийĕ атă-пушмаксен пахалăхĕпе ассортиментне лайăхлатасси çинчен сӳтсе-явнă. Атă-пушмак промышленноçĕн Тĕп управленийĕн начальникĕ Медведев юлташ хăйĕн докладĕнче халăх валли туса кăларакан атă-пушмак çинчен интереслă даннăйсем илсе кăтартнă. Пĕрремĕш кварталта туса кăларнипе танлаштарсан, II-мĕш кварталта атă-пушмак 24 процент ытларах, III-мĕш кварталта 35 процент ытларах туса кăларнă. 9 предприяти, çав шутра Тбилисири Берия ячĕпе тăракан фабрика, Мускаври Капранов ячĕпе тăракан фабрика, Горькири «Красный обувщик» халĕ ĕнтĕ халăха кирлĕ атă-пушмак çеç çĕлеççĕ. Ленинградри «Скороход» тата «Пролетарская победа» фабрикăсем, Мускаври «Парижская Коммуна» фабрика, Хусанти «Спартак» ятлă тир-сăран комбиначĕ тата çавăн пек пысăк ытти предприятисем те халăх валли атă-пушмак ытларах туса кăларма пуçланă.

Чылай предприятисенче патушасене лайăхрах çапса лартмалли майсемпе ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра атă-пушмак промышленноçĕн пĕтĕм продукцине пăхса тухаççĕ. 1946 çулта çĕлесе кăларма чи лайăх йышши атă-пушмаксене суйласа илеççĕ. (ТАСС)

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ АСТРОНОМСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УМĔН

ЛЕНИНГРАД. ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Наука академине Пĕтĕм тĕнчери астрономсен конференцине чĕннĕ. Çав конференци Копенгаген хулинче декабрĕн 20-мĕшĕнче уçăлать.

СССР Наука академийĕн тĕп астрономи обсерваторийĕн директорĕ Г. Н. Неуймин профессор ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

— Вăрçăччен Пĕтĕм тĕнчери астрономсен союзĕ пулнă. 1935 çултан пуçласа Совет Союзĕ çав союзăн ĕçне хутшăнса ĕçленĕ. Вăрçă вăхăтĕнче астрономсен союзĕн ĕçĕ питĕ вăйсăрланнă. Союзăн генеральнăй секретарьне Оорт профессора гитлеровецсем концлагере хупнă.

Халĕ, пĕтĕм тĕнчере мирлĕ пурнăç пуçланса кайнă вăхăтра, Пĕтĕм тĕнчери астрономсен союзĕн ĕçне çĕнĕрен чĕртсе яма кирлĕ пулса тăчĕ.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче уçăлакан конференци Пĕтĕм тĕнчери астрономсен конгресне пухма хатĕрленмелли ĕçсене лартса хурĕ, астрономсен союзĕн ĕçне тепĕр хут пуçласа янă май туха тăракан ыйтусене татса парĕ.

Совет астрономĕсем çав конференцие хытă хатĕрленеççĕ. Мускавра октябрĕн 15-мĕшĕпе 17-мĕшĕ хушшинче Пĕтĕм Союзри астрономсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Вăл Копенгагенра сӳтсе-явма темиçе ыйту кăларса тăратрĕ. Уйрăмăн илсе кăтартсан, пĕчĕк планетăсем тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери службăна çĕнĕрен ĕçлеттерме пуçлама, пысăк астрономи ежегодникĕсем кăларас ĕçе пĕрлештерме сĕнĕç. Пирĕн делегатсем Пĕтĕм тĕнчери конференцие тата Совет Союзĕнчи обсерваторисен «вăйсăр çăлтăрсен» каталогне хатĕрлес тĕлĕшпе тунă коллективлă пысăк ĕçе çинчен каласа парĕç. Пĕтĕм тĕнчери астрономи организацийĕсемпе обсерваторисем пĕр-пĕрне хăйсен научнăй кĕнекисене парса тăрас ыйтăва та лартĕç.

(ТАСС).

72-МĔШ ПАРАЛЛЕЛЬРЕ ПАХЧАÇИМĔÇ ӲСТЕРЕÇÇĔ

Таймыр наци округĕнче темиçе çул каярах çеç пахчаçимĕç пачах та лартса туман. Кăçал унти совхозсемпе колхозсем рис акнă, сĕрулми, купăста тата ытти тĕрлĕ пахчаçимĕç 300 геткар лартнă. Кунта июнь уйăхĕн варринче лартнă çĕрулми август уйăхĕн вĕçĕнче пулса çитет. Дудинкăри теплицăсенче арбузсем, дыньăсем, кабачоксем, помидорсем çитеççĕ. (ТАСС).

СПИРИДОН МИХАЙЛОВ

Патша саманинче Российăри вак халăхсем калама çук йывăр пусмăрта пурăннă. Вĕсен хăйсен тăван чĕлхине, литературине, культурине аталантарма май пулман. Çапах та çав вак халăхсем хушшинче те, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, хутран-ситрен паллă çынсем—ученăйсем, писательсем, обществăллă деятельсем тухма пултарнă. Халăх хушшинчен тухнă çавăн пек талантсен шутне чăвашсен XIX-мĕш ĕмĕрĕн пĕррремĕш çур пайĕнче пурăннă чи малтанхи этнографĕсенчен пĕри — Спиридон Михайлович Михайлов ученăй кĕрет.

Спиридон Михайлов 1821 çулта, кивĕ стильпе ноябрĕн 16-мĕшĕнче, Чикме уесĕнчи Юнкăпуçĕнче çуралнă. Михайлован ашшĕ вăтам чăваш хресченĕ пулнă, хăйĕн çемьипе çĕр ĕçĕпе тăрантарса пурăннă.

Михайлов пурăннă вăхăтра чăвашсем хушшинче хут пĕлекен çынсем пулмапа пĕрех. Чăваш халăхĕн хăйĕн çырулăхĕ те пулман. Çавăнпа та çамрăк Спиридон ача чухне йĕркеллĕ хут вĕренме пултарайман. Ял тĕттĕм пулнă, хресченсем чухăн пурăннă. Кăсерен хура пўртсенче хăйă мĕлтлетсе çуннă. Çак вăхăт çинчен Михайлов 1853 çулта пичетленсе тухнă «Чăвашсем çинчен этнографилле кĕскен çырса кăтартни» ятлă кĕнекере лайăх çăнласа панă.

Хăйĕн ача чухнехи пурнăçне Михайлов Юнкăпуç ялĕнче, ашшĕ-амăшĕ килĕнче пурăнса ирттернĕ.

Юнкăпуç çывăхĕнче вăл вăхăтра шкул тавраш пулман. Çамрăк Спиридонăн çав тери вĕренесси килнĕ. Ашшĕ те ăна çине тăрсах вĕрентесшĕн пулнă.

1830 çулта Спиридон Чикме хулине каять. Кунта Спиридон ашшĕн пĕр палланă хуçа, Оринино вулăсĕнче писарь пулса пурăннăскер, Михеев ятлă вырăса тухнă чăваш çынни пулнă. Сутталла туртăнакан ывăлне вăл хут вĕренме çак хуçа патне вырнаçтарса хăварать.

Çапла вара çамрăк Спиридонăн ют хулара, палламан çынсем хушшинче, халиччен курман çĕнĕ пурнăç пуçланса каять. Вырăсла каласма пĕлменни Спиридона кашни утăмрах чыхлантарать, анчах вăл нимĕнле йывăрлăха та парăнмасть. Михеев хуçа Спиридона вырăсла тата славянла саспаллисемпе паллаштарать, цифрăсем кăтарткалать, ал айне лекнĕ кĕнекесем парса вулама вĕрентет. Çамрăк Спиридон, пĕтĕм чун-хавалĕпе хĕрўленсе, мĕн кăтартнисене ăша хывса пырать. Унтан часах хăй тĕлленех вулама, çырма, шутлама вĕренет.

Каярахпа Михайлов Хусан университетĕнче вырăс историне вĕрентекен Артемьев профессорпа лайăх паллашать. 1852—1860 çулсенче вĕсем пĕр-пĕрин патне тăтăшах çырусем те ярса тăнă. Михайлов вулакан умне тухасси те çак Артемьев профессортан килнĕ, мĕншĕн тесен чи малтанхи статьине Артемьев профессор пулăшнипе Михайлов 1852 çулта «Казанские Губернские Ведомости» ятлă хаçатра пичетлесе кăларнă.

Чикме хулинче пурăннă вăхăтра Михайлован пурнăçĕ питех те тертлĕ те асаплă пулнă. Çапах та вăл хăйĕн пĕлĕвне пĕрмаях аслăлатса пырать, яланах кĕнекесемпе хаçатсем вулать, çĕнĕрен пичетленсе тухакан произведенисемпе паллашма тăрăшать. 1839 çулта Михайлова уездри земски суд канцелярин писарь помощникĕ туса хураççĕ. Тепĕр çул иртсен, Михайлов çав учрежденирех тăлмачă пулса ĕçлеме тытăнать. Çак вырăнта вăл çирĕм çул хушши ĕçлет.

Этемлĕхĕн пуян культурипе паллашнă май Михайлов пуçĕнче кунран кун пĕр чăнлăх çирĕпленсе пырать: чăваш хушшине аслă вырăс халăхĕн культурине сарас тесен, çав культурăна вĕрентекенĕн чи малтан хăйĕн вĕренмелле. Вырăс культури çуллĕшне çити çĕкленмелле, чăваш халăхне вырăс культурипе тăванлатас çулпа илсе пымалла. Çак чăнлăха ăнланса илни Михайлова тата ытларах вăй-хал парса хавхалантарать. Вăл, хăйĕн тăван халăхне çутта кăларассишĕн çунаканскер, аслă вырăс халăхĕн историне, унăн литературине тĕпчесе вĕренме тытăнать.

Михайлов земски суд канцелярине пыракан çынсемпе паллашса вĕсенчен чăваш юмахĕсемпе халлапĕсене, юррисемпе сăвисене, йăлисемпе тĕшмĕшĕсене çыра-çыра илет, тĕрлĕ çĕрти халăхсем мĕнле пурăннине сăнать, халăх историйĕ мĕнле аталанса пынине тĕпчесе пĕлме тăрăшать. Кĕске вăхăтрах Михайлов темĕн чухлĕ материал пухать. Пурăна киле вăл çав материалсене йĕркелесе çитерсе «Чăваш халлапĕсемпе юмахĕсем» ятлă кĕнеке хатĕрлет. Вăл кĕнеке 1853 çулта Хусанта пичетленсе тухнă. Çав вăхăтрах вăл «Предания чуваш» ятлă пысăк статья çырать.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсем Михайлов пурнăçĕшĕн чи паллă çулсем пулса тăраççĕ. Пĕчĕк ĕçрен тытăнса наука çулĕпе хăюллăн малалла кайса, вăл хăйне май ученăй-тĕпчевçĕ, этнограф тата фольклорист пулса тăрать.

Михайлов статьясем çырма тытăнасси 1851 çулта пуçланать. Хăйĕн чи пирвайхи ĕçне—«Повесть о пребывании в Козмодемьянске государя императора Павла Петровича» ятлă очеркне вăл 1851 çулта çырса пĕтерсе пичете панă. Вара вăл тепĕр çулта «Казанские Губернски Ведомости» ятлă хаçатăн 2-мĕш номерĕнче пичетленсе тухнă. Очеркăн умсăмахĕнче Михайлов хăйне—чăваша—çитĕнтерсе вырăспа пĕртан тунăшăн Чикме сыннисене тав тăвать.

Авторăн чĕри ăçталла туртăнни çинчен кунта нумаях чарăнса тăма та кирлĕ мар. Вăл унăн хăйĕн сăмахĕсенченех паллă. Михайлов хăй вĕренсе, вырăс культурипе паллашса культурăллă этем пулнишĕн аслă вырăс халăхне, унăн писателĕсемпе ученăйĕсене тав тăвать.

1852 çултан пуçласа 1860 çула çитиччен, сакăр çул хушшинче, Михайлов мĕн пурĕ 34 произведени пичетлесе кăларать, кунсăр пуçне тата 18 алçырăвĕ унăн ниçта пичетленмесĕр тăрса юлнă.

Михайловăн чи пысăкрах та интереслĕрех произведенийĕсем ак çаксем: «Предания и сказки чуваш», «О музыке чуваш», «Сундырская гора», «Краткое этнографическое описание чуваш», «Чувашские разговоры и сказки», «О именовании встарь чуваш татарами», «Свадьбы горных черемис Казанской губернии», «Капустики — простонародные игры русских в Козмодемьянском уезде», «История службы Козмодемьянских ямщиков», «Краткий исторический очерк чуваш», «Село Ишаки в Козмодемьянском уезде», «Село Чемеево Ядринского уезда», «Очерк расселения русского племени в Козмодемьянском уезде», «Русские свадебные обряды Козмодемьянского уезда», «Историко-статистическое описание Козмодемьянского уезда», «Воспоминания чуваш о Пугачеве» т. ыт. те. Кунта каласа тухнă произведенисемсĕр пуçне Михайлов столицăсенчи тĕрлĕ журналсен редакцийĕсене çакăн пек статьясемпе очерксем çырса янă пулнă: «О сельских приходских училищах и об успехе учения в них инородческих детей», «Лесная промышленность Козмодемьянского уезда», «О происхождении имени «чуваш» тата ыттисем те.

1856 çултан пуçласа Михайлов художествăллă произведенисем çырма пуçлать. Умлăн-хыçлăн тенĕ пекех вăл виçĕ пĕчĕкçĕ калав çырать: «Разговор на постоялом дворе», «Хитрая кошка» тата «Злополучный сын». Анчах ку калавсем пĕри те пичетленсе тухман. Çак пĕчĕк произведенисенче Михайлов чăвашпа вырăс халăхĕн йывăр пурнăçне, ĕçхалăхне сĕрулпучĕсемпе чиновниксем епле пусмăрласа, улталаса пурăннине сăнласа кăтартать.

Михайлован историпе этнографи çинчен калакан статьисене вăл вăхăтри ученăйсемпе критиксем те тивĕçлипех хакланă. Сăмахран, унăн пичетре тухнă чи пирвайхи очеркне («Чувашские разговоры и сказки») паллă востоковед, Хусан Университечĕн профессорĕ, И. Березин рецензилесе ăна пысăк хак панă. Вăл çеç мар, XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çур пайĕнче пурăннă паллă тюрколог, академик А. Куник та Михайлов кĕнекипе мухтанă.

1859 çулта, декабрĕн 16-мĕшĕнче вырăссен географи обществин ученăй совечĕ Михайлова, Хусан кĕпĕрнинчи чăвашсемпе Чикме уесĕнчи вырăссем çинчен темиçе çул хушши этнографилле тата статистикăллă паха материалсем парса тăнăшăн, кĕмĕл медаль панă.

Историпе этнографи тĕлĕшĕнчен лайăх ĕçленĕшĕн тата Академие паха алçырăвĕсем ярса панăшăн С. Михайлова Российăри Наукăсен Академийĕ те тав тунă.

Михайлован ĕçĕсем чăваш чĕлхине, историне, этнографине малалла тĕпчесе вĕренес ĕçре чылай пулăшнă. Аслă вырăс халăхĕн представителĕсем тăванла пулăшса пынипе Михайлов хăй вăхăтĕнчи вĕреннĕ çынсен виçине çитиччен çĕкленме пултарнă, этнографипе фольклор ыйтăвĕсемпе нумай статьясем çырса пичетлесе кăларма май тупнă, чăваш халăхĕн пуян фольклорне пуçтарнă, 1-мĕш Николай патшан реакциллĕ саманин йывăрлăхĕсене пăхмасăрах, хăйĕн халăхĕ çинчен историллĕ статьясем çырса кăларнă. Çакăншăн хисеплесе сума-сăватпăр та ĕнтĕ эпир Михайлова, çакăншăн ăшшăн асăнатпăр эпир унăн ятне.

Совет влаçĕ вăхăтĕнче пирĕн наука чăваш чĕлхине тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе пысăк ўсĕмсем турĕ. Халĕ ĕнтĕ чăваш ялĕсене тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем пинĕ-пинĕпе саланаççĕ. Çапах та Михайлов çырнă кĕнекесем паянхи кунччченех пирĕншĕн хăйсен пахалăхне çухатмаççĕ. Уйрăмах «Предания, легенды и сказки чувашского народа» ятлă произведени интереслă. Ку очеркра Михайлов чăвашсемпе вырăссем хушшинчи историллĕ туслăха, ют çĕршывран тапăнса кĕнĕ тăшмансене хирĕç чăвашсем яланах вырăссемпе пĕрле кĕрешнине кăтартса парать.

Михайлов 1861 çулта январĕн 15-мĕшĕнче вилнĕ. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче вăл чăваш халăхĕшĕн те, наукăшăн та нумай ĕçсем туса хăварнă. Унăн чĕринче яланах пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт вĕресе тăнă: вăл чăвашсене аслă вырăс халăхĕ патне çывхартма, хăйĕн тăван халăхне хут вĕрентсе, пуян вырăс культурипе паллаштарма, çапла вара, вырăс культури урлă чăваш халăхне ĕмĕрти тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшлĕхрен хăтарма тăрăшнă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пусмăрлăхра пурăннă халăхсене ирĕке кăларчĕ, вĕсене политика, экономика тата культура тĕлĕшĕнчен ўсе аталанма май пачĕ. Октябрьте çĕнĕрен çуралса çĕкленнĕ чăваш халăхĕ, хăйĕн юратнă тăванĕ—аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, совет влаçĕ вăхăтĕнче хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен пысăк ўсĕмсем турĕ.

П. Г. ГРИГОРЬЕВ.
Чăвашсен Наукăпа Тĕпчев Институчĕн старши научнăй сотрудникĕ.

Тито маршал „Таймс" хаçатăн корреспондентне каласа пани

ЛОНДОН, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви «Таймс» хаçатăн Белградри корреспондентне Тито маршал каласа пани çинчен пĕлтерет:

«Пирĕн Халăх фрончĕ суйлавра çĕнтерни эпир хамăрăн политикăна пăрахассине е улăштарассине пĕлтермест,—тенĕ Тито.—Пирĕн политика ĕлĕкхи пекех юлать: анлă демократиллĕ система тумалла, çав системăра кашни çын тивĕçлĕ пурнăçпа пурăнма пултартăр. Çак тĕлĕшпе пирĕн политика улшăнмасть».

Тито малалла çапла хушса каланă: Халăх фрончĕ майлă тăман çынсене хĕсĕрлемĕç, вĕсем тĕлĕшпе хăйне уйрăм мерăсем йышăнмĕç, тенĕ. Çакна каласа, Тито çапла асăрхаттарнă. Эпĕ кунта Халăх фронтне хирĕç тўрĕ кăмăлпа тухса калакан çынсем çинчен калатăп, тенĕ.

Тито тата çакна палăртнă. Германипе Италирен репараци илес тĕлĕшпе Югослави ыйтнине часрах пурнăçа кĕртни пысăк вырăн йышăнса тăрĕ, мĕншĕн тесен вăл пирĕн çĕршыва ытти çĕршывсем пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшассине чакарнă пулĕччĕ, тенĕ.

Болгарири суйлав умĕн

СОФИЯ, ноябрĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире ноябрĕн 18-мĕшĕнче халăх пухăвне суйлаççĕ. Министрсен совечĕ ноябрĕн 13-мĕшĕнче законсем кăларма пăрахнă. Малашне йышăнмалли законсене пурне те ноябрĕн 18-мĕшĕнче суйлакан халăх пухăвне тăратмалла. Министрсем, Отечественнăй фронтăн напи комитечĕн членĕсем, Отечественнăй фронта кĕрекен партисен тĕп комитечĕсен членĕсем тата халăх пухăвне депутата суйламалли кандидатсем юлашки пухусемпе митингсене ирттерме ялсемпе хуласене тухса кайнă.

Отечественнăй фронт хаçачĕсем Пловдивра, Варнăра, Плевнăра тата ытти нумай хуласемпе ялсенче ирттернĕ массăллă митингсемпе суйлав умĕнхи пухусем çинчен нумай çыраççĕ. Халăх пур çĕрте те çитес суйлавпа калама çук хытă интересленет, суйлав умĕнхи кампание активлăн хутшăнать. Оппозици пухусем ирттерме пысăк ирĕк панă. Оппозиционерсем суйлавçăсене суйлава ан хутшăнăр, тесе чĕнеççĕ, анчах суйлавçăсем вĕсене итлемеççĕ. Оппозици пухакан митингсемпе пухусене çын сахал çўрет. Çав вăхăтрах Отечественнăй фронтăн организацийĕсем пухакан митингсемпе пухусене питĕ нумай халăх çўрет.

Шалти ĕçсен министерстви влаçăн вырăнти органĕсене халăха суйлава ирĕклĕн хутшăнма май пама хушнă. Отечественнăй фронтăн напи комитечĕ, Болгари халăхĕ хăйĕн ирĕкне пĕр чăрмавсăр тата туллин палăртма пултартăр тесе, Отечественнăй фронтăн облаçсенчи, хуласенчи тата ялсенчи комитечĕсене кашни суйлав секцийĕнче суйлава общество енчен сăнаса тăракан комиссисем туса хума хушнă. Çав комиссисене Отечественнăй фронта кĕрекен партисен, массăллă организацисен, мĕнпур рабочисен профессиллĕ союзĕн, хĕрарăмсемпе çамрăксен организацийĕсен, писательсемпе журналистсен организацийĕсен представителĕсем, обществăри паллă деятельсем тата оппозици представителĕсем кĕмелле.

Морис Торез калани

ПАРИЖ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 10-мĕшĕнче Имри-Сюр-Сенра коммунистсен партийĕн членĕсен пухăвĕ пулнă. Çав пухура коммунистсен партийĕн Центральный Комитечĕн çак кунсенче пулса иртнĕ пленумĕ çинчен Морис Торез доклад туса панă.

Торез пухури çынсене октябрĕн 21-мĕшĕнчи суйлавра демократиллĕ çĕнтерў тунипе, пуринчен ытла Франци коммунистсен партийĕ çав тери пысăк çитĕнў тунипе саламланă, халăх пирĕн партие чи малти вырăна кăларса тăратрĕ, тенĕ. «Халĕ пирĕн сулахайри партисемшĕн сасăланă халăхăн ирĕкне шута илмелле,—тенĕ Морис Торез. — Учредительнăй пухăвăн демократиллĕ тата тĕнпе çыхăнман конституци çырса хатĕрлеме пуçламалла, çав конституцие трестсене пĕтерсе лартас тата демократие сарас никĕс çинче çырса хатĕрлемелле. Çакăнпа пĕр вăхăтрах промышленноçăн тĕп отраслĕсене, банксене, социальнăй страховани национализацилесси çинчен, Виши органĕсене пĕтерсе лартасси çинчен, государствăпа шкула чиркўрен уйăрасси çинчен учредительнăй пухăвăн халех решенисем йышăнмалла.

Халăхăн ирĕкне, шухăш-кăмăлне пурнăçа кĕртес тесен, паллах ĕнтĕ, халăха тивĕçлĕ правительство, социалистсемпе коммунистсем ытларах вырăн йышăнса тăракан правительство, рабочи класăн пĕрлĕхĕпе мĕнпур республиканецсен союзĕ çине таянса тăракан правительство кирлĕ. Пулас правительство пирки тăракан ыйту вăл çав правительствăн программипе составĕ çинчен калакан ыйту пулать. Дюкло юлташ социалистсен партийĕн секретарьне янă çырура каланă пек, эпир «правительство ĕçĕсен программине туса хунă ĕнтĕ» тесе шутлатпăр. Çак программа вăл—тăшмана хирĕç кĕрешекен напи совечĕн программи пулса тăрать, ăна сулахайри организацисен—ĕç конфедерацийĕн, этем прависен лигин, социалистсен партийĕн, радикалсен партийĕн тата коммунистсен партийĕн—делегацийĕсем татаклăн палăртса хучĕç». Бидо ертсе пыракан «Республикăшăн тăракан халăх юхăмĕ» ятлă парти çав сулахайри партисен делегацийĕсен программипе килĕшсех кайманни çинчен каласа, Торез коммунистсен партийĕ çав программăшăнах тăнине палăртнă.

Торез тата çакăн пирки хурланса каланă: социалистсем, октябрĕн 21-мĕшĕнче сасăланă чухне референдумăн иккĕмĕш ыйтăвĕ пирки «çапла» тесе ответлесе, çакăн пек конституциллĕ закон йышăнтарчĕç: «çав закон тăрăх правительство пуçлăхне вăл хăйĕн программи çинчен каласа париччен суйламалла. Халь çынсем хăраççĕ, вĕсем хăрани ўсе пырать; реакциллĕ хаçатсем çакăнпа учредительнăй пухăва хирĕç тата республиканецсене хирĕç усă курма пуçлаççĕ. Çапла пуласси эпир малтанах курса тăнă, ун çинчен малтанах каласа хунă». Торез хăй «Резистанс» хаçат каланипе килĕшнине палăртнă; çав хаçат хальхи пăтрашу пирки çапла çырнă: «Де Голль генералпа партисен делегачĕсем пĕр-пĕринпе тўрремĕнех калаçсан, логика енчен те, закон енчен те лайăхрах пулнă пулĕччĕ», тенĕ.

Юлашкинчен Торез коммунистсен партийĕн членĕсене «коммунистсен партийĕн ĕçне пур облаçсенче те вăйлăлатма, Франци халăхĕпе республикишĕн тăрăшма» чĕннĕ.

Финляндире вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене суд тума пуçланă

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Сословисен çурчĕн залĕнче Финляндире вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсене—Рютие, Таннера, Рангеле, Линкомиеса, Рамсая, Букконена, Рейникка, Кивимякие суд тума пуçланă.

Судра председатель пулса Верховнăй судăн президенчĕ Х. Неовиус ларать, вице-председатель пулса—аслă администраци сучĕн президенчĕ У. Кастрен, суд членĕсем пулса—Хельсинкири университетăн юридически факультетăн представителĕ Каарло Кайра тата сейм суйланă 12 член лараççĕ.

Судра, тĕп айăплакане пулса, юстици канцлерĕ Тойво Тарьянне ĕçлет.

Лару залĕнче сейм председателĕ Фагерхольм, шалти ĕçсен министрĕ Лейно, дипломати представителĕсем, Финляндипе ют çĕршывсен журналисчĕсем, СССР миссийĕн тата союзниксен контроль комиссийĕн представителĕсем лараççĕ.

Суд председателĕ Неовиус айăпланакан çынсене суд залне илсе кĕме хушать. Лару пуçлансанах Неовиус айăпланакансен тата вĕсене хўтĕлекенсен списокне вуласа парать.

Таннера хўтĕлекен адвокат Микко Эрих айăпланакан Таннер ячĕпе судăн икĕ членне—Эйно Пеккалана тата Герти Куусинена—суд составĕнчен кăларма ыйтать.

Суд, кĕске вăхăт хушши канашласан, Микко Эрих ыйтнине сирсе янă. Çакăн хыççăн суд айăпласа çырнă хута итлеме пуçланă. Айăпласа çырнине икĕ сехете яхăн вуланă. Айăпласа çырни çумне хушса хунă йышлă документсене те вуласа панă. Çав документсем хушшинче Рюти, Таннер, Кивимяки тата ыттисем те вăрçă майлă каланă сăмахсем пур.

Суд ларăвĕ çакăнпа пĕтет. Тепĕр лару ноябрĕн 16-мĕшĕнче пулать.

ЭТТЛИ США КОНГРЕСĔНЧЕ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Англи премьер-министрĕ Эттли США конгресĕн ларăвĕнче пĕтĕм тĕнчери вăрçă хыççăнхи лару-тăру çинчен сăмах тухса каланă.

ЧЕРЧИЛЛЬ БРЮССЕЛЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: паян ирхине Черчилль Парижран Брюсселе пынă, тет

СУД

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРСА ТАТМАНШĂН

Калинино районĕнчи «Труд» колхоз председателĕ В. Михайлов государствăна вăхăтра тырă, çĕрулми тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене парса татас ĕçе колхозниксене кирлĕ пек мобилизацилемен. Колхозăн паянхи куна 200 центнер тырă памалла. Тырпул пухса кĕртнĕ чухне машинăсемпе усă курман, комбайнпа вырса пухассине хирĕç пулнă. Колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Çавна пула тырпул пухса кĕртес ĕç кая юлнă. Тырра нумай тăккаласа хăварнă, 22 гектар çинче 48 центнер сĕлĕ тăккаланса юлнă.

Государствăна тырă парас ĕçе тăсса пынăшăн тата тырпул пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек организацилеменшĕн, Калинино районĕнчи халăх сучĕ «Труд» колхоз председателĕ пулнă Михайлова 5 çул хушши тĕрмене хупмалла тунă.

Врангеле аркатса тăкни 25 çул тултарчĕ

Çирĕм пилĕк çул каярах, 1920 çулхи ноябрь уйăхĕнче, граждан вăрçин мухтавлă полководецĕ Михаил Васильевич Фрунзе ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар, Сталин юлташăн стратегиллĕ планне пурнăçа кĕртсе, белогвардеецсемпе интервентсен ушкăнĕсене Крымра аркатса тăкса граждан вăрçине çĕнтерўпе пĕтерчĕ.

Пирĕн çĕршывшăн Врангеле аркатса тăкни вăрçăпа политика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Советсен пĕтĕм Российăри VIII-мĕш съездĕнче 1920 çулхи декабрĕн 23-мĕшĕнче В. И. Ленин çапла каланă:

„Хĕрлĕ Çарăн историйĕнчи чи паха страницăсенчен пĕри вăл—Врангеле пĕтĕмпех те татаклăн питĕ хăвăрт çĕнтерни пулса тăрать. Çапла вара белогвардеецсемпе империалистсем пире хирĕç пуçласа янă вăрçă пĕтсе ларчĕ".

* * *

1920 çулта çуркунне Антанта империалисчĕсем хĕçпăшаллантарнă белополяксем Украинăна килсе кĕнĕ. Вĕсем виçĕ хут вăйлăрах пулнине кура Хĕрлĕ Çар чаçĕсен чакма тивнĕ. Совет Российĕпе Польша хушшинчи вăрçă чи хаярланса пынă вăхăтра, Хĕрлĕ Çар белополяксене Житомир патĕнче аркатса тăкнă хыççăн Варшавăпа Львов патне çывхарса пына тапхăрта Крымран Антантăн юлашки ставленникĕ—Врангель барон кĕшĕлтетсе тухнă.

Деникинăн белогвардеецла çарĕн юлашкийĕсенчен Врангель, интервентсем пулăшнипе, контрреволюциллĕ чаçсем организациленĕ те, вĕсене пансен Польшине хирĕç çапăçакан Хĕрлĕ Çар тылне кĕртсе янă. Белогвардеецсен Украинăн чи тырпуллă районĕсене тытса илме май килнĕ, унтан вара Донбасс центрне пырса кĕрсе Донпа Кубань таврашĕнчи çĕршывсене хăратса тăнă. Врангель казаксемпе Махно бандине Совет влаçне хирĕç çĕклентерме ĕмĕтленнĕ. Вара белополяксемпе тата интервентсемпе пĕрле Мускав çине виççĕмĕш поход пуçласа яма шутланă. Пирĕн çĕршывшăн татах йывăр лару-тăру вăхăчĕ пуçланнă.

Большевиксен партийĕ совет халăхне Врангеле хирĕç кĕрешме çĕкленĕ. 10.000 коммуниста яхăн тата профсоюз членĕсемпе ялти чухăнсен комитечĕсен членĕсем 5.000 çынна яхăн фронта тухса кайнă. Врангеле хирĕç пыракан кĕрешĕве ертсе пыма партин Центральнăй Комитечĕ Сталин юлташа хушнă.

Врангеле хирĕç пулса иртнĕ операцисенче Сталин юлташăн полководецла генийĕ çав тери уçăмлăн палăрчĕ. Вăл хушнă тăрăх, Çĕпĕртен Колчака аркатна чухне чапа тухнă лайăх дивизисене илсе килеççĕ. Врангель фронтне Ворошиловпа Буденнăй юлташсем ертсе пыракан 1-мĕш Утлă Çара илсе пыраççĕ. Сталин юлташ кавалеристсен пысăк соединенийĕсене уйрăмах паллă вырăна хурса, 2-мĕш Утлă Çар туса хурать те ăна Александровск (хальхи Запорожье) районне илсе пырать. Çакăнпа вăл Врангеле Донбаспа Украинăна шалалла кĕме чарса лартать.

Сталин юлташ тăшмана аркатса тăкмалли плана хатĕрлесе хурать, çав плана пурнăçа кĕртме çарсене хатĕрлет. 1920 çулхи августăн 6-мĕшĕнче 13-мĕш çарпа 2-мĕш Утлă Çар, Сталин юлташăн приказĕ тăрăх, контрнаступлени пуçласа ярать. Врангелевецсем, çав тери пысăк çухатусем туса, Васильевка-Большой Токмак патнелле чакаççĕ. Сталин юлташ чирлесе ўкни ăна хăйĕн планне вĕçне çитиех пурнăçа кĕртме кансĕрленĕ. Вара Кăнтăрти фронт çарĕсене ертсе пыма Сталин юлташăн çывăх соратникне М. В. Фрунзене хушнă.

Сталин юлташ планне пурнăçа кĕртсе Фрунзе Врангель çарĕсене Каховка районĕнче пырса çапма хатĕрленет. Çакăнпа вăл тăшмана Крымран уйăрса Çурçĕр Таврире аркатса тăкма шутлать. 1920 çулхи октябрĕн вĕçĕнче Кăнтăрти фронт çарĕсем татăклă наступлени пуçласа янă. Ворошиловпа Буденнăй юлташсем ертсе пынипе 1-мĕш Утлă Çар тăшман оборонине хăвăрт аркатса унăн малти чаçĕсене пĕтерсе тăкнă та тăшманăн тылне шала кĕрсе кайнă. 6-мĕш çарăн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе 1-мĕш Утлă Çар Врангель çарĕсен сулахай пайне, Çурçĕр Таврире пулнăскере, пĕтемпех çаварса илнĕ. Çапла ĕнтĕ планăн малтанхи сыпăкне ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ. Хĕрлĕ Çар воинĕсем кунта çав тери паттăррăн çапăçнă. Тăшманăн 20.000 салтакĕпе офицерĕ вилсе, аманса е тыткăна лексе пĕтнĕ. Хĕрлĕ Çар тăшманран 100 тупă, çĕршер пулемет, 15 танк, 100 паровоз, 2000 вагон тата ытти тĕрлĕ нумай çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Белогвардеецсен уйрăм чаçĕсем çеç Крыма тарса кĕме пултарнă.

Хĕрлĕ Çар умĕнче халĕ тăшмана Крымра аркатса тăкас задача тăнă. Анчах та Крыма пырса кĕме çăмăл пулман. Хĕрлĕ Çар умĕнче Перекоппа Чонгарăн ансăр перешеекĕ выртнă. Çав перешеексене Антантăн çар специалисчĕсем ертсе пынипе питĕ вăйлăн тĕреклетнĕ. Хура тинĕспе Азов тинĕсĕ хушшинчи çав перешеексене çар карапĕсем хўтĕлесе тăнă. Вĕсене никам та илме пултараймасть тесе шутланă. Перекопри операцисем пирĕн çарсен йывăр артиллери те, самолетсем те, шыв урлă каçмалли хатĕрсем те çителĕксĕр пулнипе татах та йывăрланнă. Тăшманăн çавăн йышши хĕçпăшалсемпе хатĕрсем ытлашши те пулнă. Анчах та Врангель туса çирĕплетнĕ вырăнсем Хĕрлĕ Çар воинĕсен çĕнтерўллĕ хавхаланăвне тытса чарма пултарайман. Вĕсем çĕнтерĕве çирĕп шанса тăнă, çавăнпа та тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма тăрăшнă. Ленинпа Сталинăн приказĕ те çавнах хушнă. Мĕнпур совет халăхĕ те çавнах кĕтнĕ.

Вырăнпа лайăх паллашнă хыççăн тата тăшманăн тĕреклетнĕ системисене разведка туса тĕрĕсленĕ хыççăн, Фрунзе тăшмана хăш енчен пырса çапмаллине çав тери ăста палăртса хунă. Вăл 6-мĕш çар дивизийĕсене Сиваш урлă каçса Перекоп позицийĕсене флангран тылран пырса çапма, çавăнпа пĕрлех тата Турци валне фронтран атакăлама приказ панă.

1920 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче çĕрле Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Сиваш урлă каçнă та Перекоп позицийĕсене штурмлама тытăннă. Тăхлан çăмăрĕ наступлени тăвакан цепьсене çула-çула пăрахнă. Малта пыраканнисем тĕршĕне-тĕршĕне аннă, вĕсем хыççăн татти-сыпписĕр çĕнĕрен те çĕнĕ чаçсем пырса тăнă. Наступлени тăваканнисен чи малти ретĕнче коммунистсемпе комсомолецсем паттăррăн çапăçнă. Вĕсем ытти боецсене хавхалантарса пынă. Врангелевецсем кун каçиччен 6—7 хут контратака тунă, тупăсемпе пулеметсем татти-сыпписĕр персе тăнă, анчах та Хĕрлĕ Çар чаçĕсен наступленине нимĕн те чарма пултарайман.

Тăшман пирĕн çарсем пырса çапнине тўсеймесĕр, вилнĕ е аманнă çыннисене пиншерĕн пăрахса хăварса каялла чакма тытăннă. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Турци валĕ çине çĕмĕрсе кĕнĕ. Çапла вара Перекоп парăннă. Врангелевецсем чакса Юшунь позицийĕсем хыçне кĕрсе пытаннă. Артиллерирен вăйлăн персе тăнипе тата питĕ йăвă лартса тултарнă пралук картасем пулăшнипе тăшман кунта тытăнса тăма шутланă. Анчах та унăн ĕçĕ ăнăçлă пулман. Çапăçу мĕнле пынине тимлĕн сăнаса пынă Фрунзе, чи малти линисенче пулса, резерври чаçсене çапăçăва кĕртсе янă, татăклă атакăра çарсене хăй ертсе пынă. Атака ăнăçлă пулнă. Врангелевецсен юлашкийĕсем Хура тинĕсри портсем патнелле тарнă. Вĕсем ют çĕршывсене тухса тарас тесе, нимĕн йĕркине пĕлмесĕр карапсем çине пырса капланнă. 1-мĕш Утлă Çар чаçĕсемпе пехота чакса пыракан тăшмана хыçран хăваланă. Ноябрĕн 15-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çар Севастополе йышăнса илнĕ. 1920 çулхи ноябрĕн 17-мĕшĕнче пĕтĕм Крымра Совет влаçĕ туса хунă.

„Российăри контрреволюцин юлашки йăвине аркатса тăкна", — тесе пĕлтернĕ çав кун Ленина Фрунзе.

Çапла 25 çул каярах граждан вăрçи пĕтнĕ. Пирĕн çĕршыв большевиксен партийĕ ертсе пынипе, Ленинпа Сталин ертсе пынипе мирлĕ пурнăç тума тытăннă. Белогвардеецсемпе интервентсене аркатса тăкнă, унтан вара Отечественнăй аслă вăрçăра хамăрăн Тăван çĕршывăн чыслăхне, ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне фашистла захватчиксенчен хўтĕлесе хăварва паттăр Хĕрлĕ Çара тивĕçлипе сума суса совет халăхĕ аслă Сталина тав тăвать. Вăл ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршыв социализмлă хăватлă держава пулса тăчĕ. Вăл ертсе пынипе совет халăхĕ нимĕçпе японец агрессорĕсене парăнтарса историллĕ çĕнтерў турĕ. Сталин юлташ ертсе пынипе Совет çĕршывĕ социализм строительствинче çĕнĕ çитĕнўсем патнелле малалла шанчăклăн пырать.

Гварди полковникĕ
Г. ТОЛОКОЛЬНИКОВ.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00697 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ [illegible] 2. ш. 6. 60x42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.